Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчеппе тухать

23-24 (7663-7664) №№ ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи мартăн (пуш) 21-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**Пултаруллă яш-кĕрĕм**



## Ĕçе ответлăха туйса пурнăçлаççĕ

***Районта суд приставĕсен службине йĕркелени вунă çула яхăн кăна. Апла пулин те кунта вăй хуракансем пурнăçлакан ĕç калăпăшĕ те, унăн пĕлтерĕшĕ те пĕчĕк мар. Ăна çак цифрăсем те аван çирĕплетеççĕ. Суд приставĕсем вырăнсене тухса тĕрĕслевсем ирттерсе иртнĕ çул штрафсемпе налуксем, ытти тĕрлĕ тӳлевсем организацисенчен, уйрăм çынсенчен 20 миллион тенкĕ ытла шыраса илме май тупнă. Вăл шутра бюджета тавăрнă укçа-тенкĕ сумми те пĕчĕк мар.***

***Эсир сăн ӳкерчĕкре суд приставĕсене-исполнительсене Анастасия Захаровăна, Марина Порфирьевăна тата Сергей Шарапова, Алексей Бочкарева, Станислав Парандеева куратăр. Çулĕсемпе çамрăк пулин те, шанса панă ĕçе ответлăха туйса пурнăçлаççĕ вĕсем.***

**В. ШАПОШНИКОВ** сăн ӳкерчĕкĕ.

**Çур аки умĕн**

## Медосмотр тăрасах пулать

Ĕç сыхлавĕпе ĕç условийĕсем енĕпе ĕçлекен районти координаци канашĕн черетлĕ ларăвĕ иртрĕ. Унта çур аки ĕçĕсене тытăнас умĕнхи ĕçсене пăхса тухрăмăр.

Паллă ĕнтĕ, предприятисемпе организацисен çак ответлă тапхăр пуçăниччен хăйсен ĕçченĕсене медосмотр тăратмалла. Районти тĕп больницăран пĕлтернĕ тăрăх вара чылай çĕрте çак условисене пăхăнмаççĕ, медосмотр тăмалли графиксене пăсаççĕ, рабочи профессийĕсен списокĕсене Роспотребнадзорпа килĕшсе тăратмаççĕ, çак ĕçшĕн ответлисене çирĕплетмеççĕ. Ку вара Ĕç кодексĕн требованийĕсене пăсни пулать. Манма кирлĕ мар, медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухман çынсене ĕçе явăçтарнăшăн предприятисен ертӳçисем тӳрремĕнех ответ тытма тивĕç.

РФ Правительствин 2002 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн гостехнадзор органĕсем медосмотр тăман механизаторсемпе водительсене техникăпа усă курма чараççĕ. Çавăнпа та çывăх вăхăтрах ку тĕлĕшпе çитменлĕхсене пĕтерес пулать.

**В. АНАНЬЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ĕç сыхлавĕпе ĕç условийĕсем енĕпе ĕçлекен районти координаци канашĕн председателĕ.**

**Мартăн 25-мĕшĕнче – Культура ĕçченĕсен кунĕ**

## Ялти клубсен малашлăх пур-и?

***2009 çула республикăра Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе палăртнă. Çак ăнланăвăн анлăшĕ пысăк. Вăл экономикăпа та, культурăпа та, историпе те çыхăннă. Республика Президенчĕ Николай Федоров палăртнă тăрăх вара кунпа пĕрлех культура вăл экономикăран та пысăкрах пĕлтерĕшлĕ. Çавна май Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнче ял культурине ӳстересси çине питĕ пысăк тимлĕх уйăрĕç.***

***Çĕнни мĕн кĕтет ялсенчи культура учрежденийĕсене – кун пирки Чăваш Республикин культура, национальноç ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министрĕ Роза ЛИЗАКОВА каласа парать.***

**– Роза Михайловна, калăрха тархасшăн, ялти хальхи клубăн еплерех пулмалла?**

– Яланах ялсенче культура центрĕсем вĕсем клубсем пулса тăнă. Вăрттăнлăх мар, хăшпĕр çĕрте юлашки çулсенче вĕсем «культура вучахĕсем» пулма пăрахрĕç. Нумаях пулмасть кун пек проблема ялсенчи библиотекăсем тĕлĕшпе те пурччĕ. Вырăнсенче тĕслĕх библиотекăсем йĕркелени ку сферăна пахалăх тĕлĕшпе пысăкрах шая çĕклеме май пачĕ. Библиотекăсене çӳрекенсен шучĕ те ӳсрĕ, вĕсем пурнăçлакан услугăсен тĕсĕсем те йышланчĕç. Раççей шайĕнчи çак ăнăçлă опыт ялти клубсен ĕçне-хĕлне çĕнетсе улăштарассин концепцийĕн тĕп тытăмĕ пулса тăчĕ.

Ялсенчи хальхи клуб учрежденийĕсем нумай профильлĕ культурăпа социаллă центрсем пулса тăмалла. Унта курма пыракансем, кружоксенче тата пултарулăх коллективĕсенче ăсталăха туптакансем хăйсене хăтлă туйччăр.

**– Чăваш Ен Президенчĕ «Чăваш Республикинчи ялсенчи культура учрежденийĕсене аталантарассин мерисем çинчен» Указ йышăннăранпа çулталăк ытла иртрĕ. Çак тапхăрта мĕн тума май килчĕ-ха?**

– Паянхи тĕп проблемăсенчен пĕри вăл – ялсенчи клубсемпе Культура çурчĕсен шайĕ. Вĕсенчен çуррине яхăн 1970 çулччен тунă, чылайăшĕнче тахçантанпах юсав ĕçĕсем туса ирттермен, вĕсене реконструкцилемелле тата техника тĕлĕшпе модернизацилемелле. Çĕнĕ программăпа килĕшӳллĕн эпир пысăк тăкак кӳрекен тата ытларах чухне юхăнчăк 800 клуб вырăнне клуб учрежденийĕсен çĕнетнĕ эффективлă сетьне йĕркелеме планлатпăр. Куст йĕркипе вĕсенче финанс, интеллектуаллă тата пурлăх ресурсĕсене пĕрлештерĕпĕр. Çакă клуб учрежденийĕсем тивĕçтерекен услугăсен пахалăхне çĕнĕ шая çĕклеме, кашни клуб центрĕ тавра чи лайăх пултарулăх вăйĕсене пĕрлештерме май парĕ. Анчах та çакăнтах палăртса хăварнă пулăттăм: эпир пур художество коллективĕсене те, пултарулăх ушкăнĕсене те сыхласа хăварасшăн. Ку питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

2008 çулта программăна пурнăçа кĕртме республика бюджетĕнчен 20 миллион тенкĕ уйăрнă. Çакă 27 культурăпа кану учрежденине сасăна вăйлатмалли, çутă тата видеопроекци оборудованийĕпе, компьютерсемпе, сцена костюмĕсемпе тивĕçтерме, ял тăрăхĕсене Культура çурчĕсенче юсав ĕçĕсем туса ирттерме пулăшма май панă. Муниципалитетсем хăйсен укçи-тенкипе çуртсен çийĕсене, фасадсене, курав залĕсене, кружок ĕçĕ-хĕлĕн пӳлĕмĕсене юсанă. Иртнĕ çул муниципалитетсенче çуртсенче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерме 2007 çулхинчен 1,4 хут ытларах е пĕтĕмпе 52 миллион тенкĕ укçа уйăрнă.

Модернизаци программинче те çавăн пекех палăртнă: республика культурăпа кану учрежденийĕсене сасăна вăйлатмалли, çутă, видеопроекци оборудованийĕсемпе, компьютерсемпе, лазер принтерĕсемпе, сканерсемпе, сцена костюмĕсен комплекчĕсемпе, сцена çи-пуçĕпе тивĕçтерет, вырăнсенче вара клуб учрежденийĕсенче капиталлă юсав ĕçĕсене туса ирттереççĕ, газ, телефон кĕртеççĕ, çуртсемпе пӳлĕмсене реконструкцилеççĕ, сĕтел-пукан туянаççĕ, территорисене тирпей-илем кĕртеççĕ.

**– Техника базине май пур таран хăвăртрах пуянлатас текен, анчах та çуртсен çийĕсене, фасадсене, концерт пӳлĕмĕсене юсама укçа çук Культура çурчĕсен мĕн тумалла пулать-ха?**

– Мĕнле калаççĕ-ха: питĕ тăрăшсан тата çине тăрсан... пĕтĕмпех тума пулать. Выртакан чул айĕпе шыв юхмасть тесе ахальтен каламан. Республикăра та çакăн пек тĕслĕхсем сахал мар. Культурăпа кану учрежденийĕсен ĕçченĕсем хăйсемех тата хăйсен вăйĕпех юсав ĕçĕсене тытăнаççĕ, ялти активлă çынсене çак ĕçе явăçтараççĕ. Кайран вара, куратпăр, çак пуçарулăха кура ял тăрăхĕн пуçлăхĕ те, хыççăн район пуçлăхĕ те вĕсене пулăшма тытăнаççĕ. Шăпах çапла пулса тухрĕ те Елчĕк районĕнчи Курнавăш ялĕнче. Алă усса патшалăх пулăшасса кĕтсе ларакансен вара клуб çурчĕсене модернизацилесси паян-ыранах пулаймĕ.

**– Пĕлтерĕшлĕ ыйтусенчен пĕри, яланхи пекех – культура объекчĕсене газ кĕртесси. Паянхи куна ку енĕпе ларутăру мĕнлерех-ши?**

– 2010 çул тĕлне республикăри муниципаллă йĕркеленӳсем культура учрежденийĕсене çут çанталăк газĕ кĕртсе пĕтерме палăртаççĕ. Иртнĕ çул 54 клуба газ кĕртнĕ. 2009 çулта вырăнти влаçсем 60 культура учреждениине газпа хутса ăшăтма тытăнасшăн. Проблемăсем вара Çĕрпӳ, Пăрачкав, Сĕнтĕрвăрри, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче çук мар-ха. Вĕсенче газификаци шайĕ 40 процента та çитеймест.

**– Библиотекăсене модернизацилени анлă калăпăшлă Интернет сетьне тухма майсем туса пачĕ. Чылай библиотекăсем хăйсен сайчĕсене йĕркелерĕç. Клуб учрежденийĕсене информатизацилесси епле шайра-ха?**

– Хальхи вăхăтра клубсенче 133 компьютер шутланать, ку хисеп çулталăк хушшинче 16 процент ӳсрĕ. 21 учреждениre (тĕпрен илсен, район центрĕсенчи Культура çурчĕсенче) Интернета тухма май пур. Культурăпа кану учрежденийĕсенче информаципе коммуникаци технологийĕсене пурнăçа кĕртессипе пысăк ĕç туса ирттереççĕ. Эпир компьютерсемпе тивĕçтернипе çеç çырлахасшăн мар, вĕсемпе епле тухăçлă усă курнине те тĕрĕслесе тăрăпăр. Культура çуртĕнче компьютерпа вăйăсен приставки е пичет машинки вырăнне кăна усă курни йĕркеллĕ япала мар.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Аслă пуху**

## Эпир халăх йышĕпе тăваттăмĕш вырăнта

Ĕнер Шупашкарта Чăваш наци конгресĕн 7 Аслă пухăвĕ ĕçлерĕ. Унта чăваш халăхĕн 500 яхăн хастарĕ хутшăннă. Вăл шутра чикĕ леш енчен килнĕ 6 делегат, Раççейри 29 субъектран çитнĕ 102 делегат тата тăван республикăри 230 делегат.

Паян Раççейре 1637,1 пин чăваш пурăнать. Халăх хисепĕпе эпир вырăссем, тутарсем, пушкăртсем хыççăн 4-мĕш вырăнта тăратпăр. Çапла калаççĕ 2002 çулхи çырав кăтартăвĕсем. Çав хушăрах икĕ çырав хушшинче пирĕн халăх 136 пин çын чухлĕ чакнă. Унсăр пуçне хăйне чăваш текен 337 пин çын тăван чĕлхепе калаçма пултараймасть.

Чăваш наци конгресĕн 1 Аслă пухăвĕ 1992 çулхи юпа уйăхĕнче иртнĕ. Унтанпа тĕрлĕ регионсенчи чăвашсене пĕрлештерсе тăракан 80 яхăн центр йĕркеленĕ. Вăрттăнлăх мар, паян республикăра чăваш халăхĕн çурри кăна пурăнать, ытти Раççей, тĕнче тăрăх саланнă.

Пуç-хĕрлĕ çаврăнакан тĕнче чăваш çынни умне те тĕрлĕ йывăрлăхсем кăларса тăратрĕ. Ĕçрен хăраман чăваш вĕсене çĕнтересси пирки иккĕленмĕпĕр. Чăваш пĕтсен тĕнче пĕтет тенине манар мар.

**Район çыннисене пĕлме**

## Çĕнĕ телефон справочникĕ хатĕрлеççĕ

Район пуçлăхĕн ятарлă хушăвĕпе районăн телефон справочникне хатĕрлесе кăларассипе ĕç ушкăнĕ йĕркеленĕ.

Аналог çыхăнăвне цифра çине куçарнă хыççăн телефонсен номерĕсем улшăнса пĕтрĕç. Цифра çыхăнăвĕ телефонпа усă куракансене пысăк майсем парать: Интернета тухма пулать, кирек ăçта та шăнкăравлама май пур, çыхăну та шанчăклăрах.

Номерсем улшăнни, чăнах та, пысăк чăрмав. Çавăнпа çĕнĕ справочник кăларма палăртнă та. Уйрăм çыннăн хăйĕн номерне çак справочнике кĕрттерес тесен Муркашри линипе техника цехне заявлени çырса памалла. (Заявленисене почта уйрăмĕсенче те йышăнаççĕ.) Çыхăну çинчен калакан саккун çапла ыйтать. Унсăрăн уйрăм çын номерне справочнике кĕртмеççĕ.

Предприятисемпе организацисен, хуçалăхсемпе учрежденисен хăйсен тулли ятне, электрон адресне тата кĕсье телефонĕсен номерĕсене кăтартса çырнă хутпа тухмалла.

Тĕплĕнрех линипе техника цехĕнче, район администрацийĕн культура тата информатика пайĕсенче ыйтса пĕлмелле.

**Хамăр инф.**

**Райадминистрацире**

## Хастар ĕçшĕн – Хисеп грамоти

***Районти шалти ĕçсен пайĕ ыйтнине тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн 2009 çулхи мартăн 5-мĕшĕнчи 136 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн пуçлăхĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

1. Право йĕркелĕхне çирĕплетессипе çине тăрса ĕçленĕшĕн тата районăн экономикăпа социаллă аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хывнăшăн:

– **Евгений Дмитриевич МАКАРОВА**, районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхне;

– **Юрий Григорьевич СОЛОВЬЕВА**, районти шалти ĕçсен пайĕн ветерансен канашĕн членне;

– **Вениамин Владимирович ЛОБАСТОВА**, районти шалти ĕçсен пайĕн ветерансен канашĕн членне.

2. Оперативлă служба ĕçĕ-хĕлĕнче тунă çитĕнӳсемшĕн:

– **Людмила Васильевна КРОЛЬКОВАНА**, районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн кадрсем енĕпе пулăшаканне;

– **Евгений Иванович ПЛЕЧОВА**, районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумне.

**Саламлатпăр**

Хамăрăн ăшă кăмăллă та чĕререн хисеплесе юратнă аннене – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Роза Александровна АРАПКИНАНА** 55 çулхи юбилейпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Хаклă аннеçĕм, эсĕ пире пурнăç парнелерĕн, ура çине çирĕппĕн тăратрăн, пурнăç çулĕ çине тухма яланах ырă канашсемпе пулăшрăн. Паян та эсĕ пире хавхалантарса пулăшсах тăратăн. Сана юбилейпа саламласа нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, тулли телей сунатпăр. Телейлĕ кулă çиçтĕр яланах сăн-питӳнте.

**Салампа: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем.**

Карманкасси ялĕнче пурăнакан чунтан юратнă **Галина Гурьевна СМИРНОВАНА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Ан ватăл эсĕ, ан чирле,
Куллен хавас чунпа çӳре,
Ялан пул пирĕнпе пĕрле
Йышра, тулли кĕрекере.

**Саламлаканĕсем: Максимовсемпе Павловсем.**

Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Алексей Петрович СТЕПАНОВ** мартăн 21-мĕшĕнче 50 çул тултарать. Çав ятпа эпир ăна, мĕн пур тăванĕсем, ăшшăн саламласа, вăрăм кун-çул тата çирĕп сывлăх сунса çак сăвă йĕркисене халаллатпăр.

Алеша, Алексей Петрович, саншăн кашни çĕнĕ кун телейлĕ килтĕр.

Çăл тапма пăрахсан
Унăн шывĕ типет,
Çын утма пăрахсан
Ун тĕллевĕ çĕтет.
Çăл, тапма ан пăрах,
Шывлă пул, шыв ĕçтер.
Эс утма ан пăрах,
Тĕллеве ан çĕтер.

**Салампа сана хисеплесе Кашмашри, Муркашри, Йӳтĕркассинчи тăванусем.**